


# *9 класс пĕтерекенсене тĕрĕс ҫырăва, пуплеве хăнăхтарасси*

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин доценчĕ*

# Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне сырура палăртасси

| **Ь** сырмалла | | **Ь** сырмалла мар | |
|---|---|---|---|
| **Хытă сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен** | *ахаль* *выльăх* | **Çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен** | *мехел* *пĕлет* |
| ***Ь* паллăпа вĕçленекен сăмах çумне хупă сасăпа пуçланакан аффикс хушăнсан** | *тетрадьпе* *хальлĕхе* | ***Ь* паллăпа вĕçленекен сăмах çумне уçă сасăпа пуçланакан аффикс хушăнсан** | *тетраде* *халех* |
| **Чăваш сăмахĕсенче икшер сасса пĕлтерекен *е, ю, я* сас паллисем умĕн** | *кĕсье* *тухья* | **Хытă сыпăкри *л, н* хупă сасăсем *ç, ч* умĕнче çемçен итĕнсен те** | *мунча* *пылчăк* |

# Шавлă хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни тата вĕсене çырура палăртасси

<table>
<tr><td colspan="4">К, п, с, ç, т, х, ч, ш<br>хупă сасăсем икĕ уçă сасă тата ялан янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче</td></tr>
<tr><td colspan="2">янăраса (кĕскен) илтĕнсен</td><td colspan="2">янăрамасăр (вăрăммăн) илтĕнсен</td></tr>
<tr><td rowspan="3">пĕр хупă сасă</td><td>тĕтĕм</td><td rowspan="3">икĕ хупă сасă</td><td>тĕттĕм</td></tr>
<tr><td>ăшăн</td><td>ăшшăн</td></tr>
<tr><td>така</td><td>такка</td></tr>
</table>

# Ялан янăравлă хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни тата вĕсене çырура палăртасси

<table>
<tr><td colspan="4">В, й, л, р, м, н<br>ялан янăравлă хупă сасăсем</td></tr>
<tr><td colspan="2">кĕскен илтĕнсен</td><td colspan="2">вăрăммăн илтĕнсен</td></tr>
<tr><td rowspan="3">пĕр хупă сасă</td><td>сивĕн</td><td rowspan="3">икĕ хупă сасă</td><td>сиввĕн</td></tr>
<tr><td>алă</td><td>аллă</td></tr>
<tr><td>тăри</td><td>тăрри</td></tr>
</table>

# *Ă (ĕ)* сасăпа пĕтекен япала ячĕсене камăнлăх форминче тата камăнлăхпа пару падежĕнче çырасси

<table>
<tr><th colspan="6">Ă (ĕ) сасăпа пĕтекен япала ячĕ</th></tr>
<tr><td colspan="4">икĕ сыпăклă</td><td colspan="2" rowspan="2">виçĕ сыпăклă</td></tr>
<tr><td colspan="2">ă (ĕ) сасă умĕн пĕр хупă сасă</td><td colspan="2">ă (ĕ) сасă умĕн икĕ хупă сасă</td></tr>
<tr><td rowspan="5">пу-лă</td><td>пуллăм</td><td rowspan="3">пĕр-чĕ</td><td>пĕрчĕм</td><td rowspan="5">ю-рă-çă</td><td>юрăçăм</td></tr>
<tr><td>пуллу</td><td>пĕрчӳ</td><td>юрăçу</td></tr>
<tr><td>пулли</td><td>пĕрчи</td><td>юрăçи</td></tr>
<tr><td>пуллăн</td><td rowspan="2">вăр-çă</td><td>вăрçăн</td><td>юрăçăн</td></tr>
<tr><td>пулла</td><td>вăрçа</td><td>юрăça</td></tr>
</table>

## ***У (ÿ)*** **сасăпа пĕтекен япала ячĕсене камăнлăх форминче тата камăнлăхпа пару падежĕнче çырасси**

| ***У (ÿ)*** **сасăпа пĕтекен япала ячĕ** | | | |
|---|---|---|---|
| чăваш сăмахĕ | | вырăс сăмахĕ | |
| ***çыру*** | *çырăвăм* | ***кенгуру*** | *кенгурун* |
| | *çырăву* | | *кенгуруна* |
| | *çырăвĕ* | | *кенгурупа* |
| | *çырăвăн* | ***Баку*** | *Бакун* |
| | *çырăва* | | *Бакуна* |

# Пайăр ятри пур сăмаха та пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси

| | |
|---|---|
| Çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, хушма ятне | *Иван Яковлевич Яковлев* |
| Чĕр чун ячĕсене | *Кампур* |
| Мăшăрлатнă ятсемпе хушаматсене | *В.З. Иванов-Паймен* |
| Транспорт, çар хатĕрĕсен, тĕрлĕ машинăпа приборăн, изделин уйрăм тĕсне е серине пĕлтерекен ячĕсене | *«Аврора» (крейсер)* |
| Чи аслă организацисемпе учреждениесен ячĕсене | *Аслă Канаш* |
| Чи пысăк должность е хисеплĕ звани ячĕсене | *Раççей Федерацийĕн Президенчĕ* |
| Географи объекчĕсен ячĕсене (*хула, ял, океан, шыв* йышши сăмахсемсăр пуçне) | *Çĕмĕрле хули*<br>*Сăр* е *Сăр шывĕ* |
| Дефиспа çыракан географи ячĕсене | *Шор-Пайраш* |
| Астрономи ячĕсене (*çăлтăр* йышши сăмахсемсĕр пуçне) | *Алтăр çăлтăр* |
| Тĕн вĕрентĕвĕнче тата мифологире тĕл пулакан пайăр ятсене | *Иисус Христос* |

# Малтанхи сăмахне çеç пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси

| | |
|---|---|
| Министерствăсен, наука учрежденийĕсен, вĕренӳ заведенийĕсен, театрсен, музейсен, промышленноçпа суту-илӳ организацийĕсен ячĕсене | *Чĕмпĕр чăваш шкулĕ* |
| Произведенисен, пичет органĕсен, предприятисен кавычкăна хупнă ячĕсене | *«Кайăк тусĕ» повесть* |
| Уяв ячĕсене | *Çĕнтерӳ кунĕ* |
| Историпе геологи тапхăрĕсен е событийĕсен ячĕсене | *Тăван çĕршывăн аслă вăрçи* |
| Чукун çул станцийĕсен, вокзалсемпе аэропортсен ячĕсене | *Канаш вокзалĕ* |
| Произведенисен, пичет органĕсен, предприятисен кавычкăна хупнă ячĕсене | *«Симĕс ылтăн» повесть* |
| Кăкăрлăх паллисен кавычкăна илекен ячĕсене | *«Ленинграда хӳтĕленĕшĕн» медаль* |

# Сас палли ячĕсенчен пулнă аббревиатурăсене çырасси

| | |
|---|---|
| **Пуçламăш сас паллисене е пуçламăш сасăсене пĕрлештерсе тунă сăмахсене вырăсла çырнă пекех çырмалла** | ***МГУра вĕренет*** <br> ***ГЭСпа юнашар*** <br> ***вузра вĕренет*** |

# *-Лӑ (-лӗ)* аффикслӑ паллӑ ячӗсене ҫырасси

| Уҫӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахран пулнӑ | | Хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахран пулнӑ | |
|---|---|---|---|
| *хӗрӳ* | *хӗрӳллӗ* | *савӑнӑҫ* | *савӑнӑҫлӑ* |
| *пултару* | *пултаруллӑ* | *илем* | *илемлӗ* |

# - *Лăх (-лĕх), -ла (-ле), -лан (-лен)* аффикслă сăмахсене çырасси

| -*Лăх (-лĕх), -ла (-ле), -лан (-лен)* аффикс хушăнакан сăмах | |
|---|---|
| *Л* сасăпа вĕçленет | *Л* сасăпа вĕçленмест |
| *несĕл + лĕх* | *пултару + лăх* |
| *эмел + ле* | *пурнăç + ла* |
| *кахал + лан* | *асап + лан* |

# Шут хисеп ячĕсене çырасси

| Япалан шутне палăртнă чух | Ĕç миçе хут пулнине палăртнă чух |
| --- | --- |
| *Каникулта* ***виçĕ*** *кĕнеке вуласа тухрăм* | *Сана* ***виççĕ*** *каларăм ĕнтĕ.* |
| *Эрнере* ***çичĕ*** *кун.* | ***Çиччĕ*** *виç те* ***пĕрре*** *кас.* |

# Хисеп ячĕсене цифрăпа çырнă чухнехи уйрăмлăхсем

| Араб цифри çумне аффикс хушсан вĕсем хушшине кĕске йĕр лартмалла | Рим цифри хыççăн аффикс хушса çырмаççĕ |
|---|---|
| *Çу уйăхĕн 9-мĕшĕ* | *XIX ĕмĕр* |
| *29-мĕш рота* | *I том* |

**Асра тытăр!**

**Традици тăрăх, çула палăртнă чух çапла çырмалла:** ***1941 çулта, 1945 çулхи, 2020 çултан*** **т.ыт.те.**

# *-Тар (-тер)* аффиклă глаголсене çырасси

| Пĕр сыпăклă глагол çумне хушăнсан | Темиçе сыпăклă глагол çумне хушăнсан | |
|---|---|---|
| | Уçă сасăпа е *р* хупă сасăпа пĕтсен | Ытти сасăпа пĕтсен |
| *т*<br>*кил + тер*<br>*çу + çутар* | *тт*<br>*ĕçле + ттер*<br>*шăвар + ттар* | *т*<br>*çитĕн + тер*<br>*килĕш + тер* |

# *-чăр (-чĕр)* аффиклă глаголсене çырасси

| Уçă сасăпа пĕтекен сăмах çумне хушăнсан | Ялан янăракан хупă сасăпа пĕтекен сăмах çумне хушăнсан | Янăравсăр хупă сасăпа пĕтекен сăмах çумне хушăнсан |
| --- | --- | --- |
| ***чч*** | | ***ч*** |
| ***упра + ччăр*** <br> ***итле + ччĕр*** | ***кай + ччăр*** <br> ***çĕнтер + ччĕр*** | ***тыт + чăр*** <br> ***сик + чĕр*** |

# Татăксене пĕрле, уйрăм е дефиспа çырасси

| Пĕрле | Дефиспа | Уйрăм |
|---|---|---|
| *никам* | *çыр-ха* | *шăп паян* |
| *такам* | *эсĕ-çке* | *лăп та шай* |
| *темĕн* | *тухрĕ-и* | *эпĕ çеç* |
| | *килчĕ-ши* | *вăл кăна* |
| | *кайрĕ-шим* | *кирек мĕн* |
| | *курчĕ-им* | *çав иккен* |
| | *кайрĕ-иç* | *килет имĕш* |
| | *аван-мĕн* | *кайрĕ эппин* |
| | *куртăн-тăр* | *вăл та* |
| | *илтрĕн-тĕр* | *эпĕ те* |
| | | *ан кай* |
| | | *каям мар* |
| | | *килес çук* |
| | | *пулать вĕт* |
| | | *çын тăк çын* |
| | | *хĕр тĕк хĕр* |

# Подлежащипе сказуемăй хушшине тире лартасси

| | |
|---|---|
| **Шухăша уçăмлăрах тăвас тесен тире лартмалла** | ***Манăн ват асатте – ветеран.*** |
| **Шухăш уçăмлăхĕ çителĕклĕ пулсан тире лартмалла мар** | ***Манăн ват асатте  ветеран.*** |

# Союзпа çыхăннă пĕр йышши членсене чарăну паллисемпе уйăрасси

| Запятой лартмалла мар | |
|---|---|
| **О *тата* О.** | *Сунар станцинче Тараев валли пĕр купа <u>çыру</u> тата <u>хаçат-журнал</u> выртнă.* |
| **О *та (те)* О.** | *Ун <u>вăрăм</u> та <u>çăра</u> куç тĕкне пас тытнă.* |
| **О *е* О.** | *Ниçта пĕр хут <u>татки</u> е <u>çӳпĕ</u> йăваланса выртмасть.* |

**Асăрхăр! Сыпăнтаракан *та (те)* союзпа çыхăнакан пĕр йышши сказуемăйсем хушшине ытти сăмахсем кĕртсе лартни вĕсен хушшинчи паузăна вăрăмлатать, çапах та ун пек чух та вĕсене запятойпа уйăрмалла мар.**
***Каççан тинкерсе пăхнă та ун çине кăвакарса кайнă.***

# Союзпа çыхăннă пĕр йышши членсене чарăну паллисемпе уйăрасси

| Запятой лартмалла | |
|---|---|
| **О, анчах О.** | *Асамлă куç çĕре ӳкет, анчах çĕре çитеймест.* |
| **О, çапах О.** | *Питĕ васкарăм, çапах ĕлкĕреймерĕм.* |
| **Те О, те О.** | *Те савăннипе, те вăтаннипе пачах çухалса кайрăм.* |
| **Е О, е О.** | *Е Мускава, е Шупашкара вĕренме кайăп.* |
| **Ни О, ни О.** | *Алтатье ни йĕме, ни калаçма пултараймасть.* |
| **Пĕр О, пĕр О.** | *Санюкăн пичĕ пĕр хĕрелет, пĕр шуралать.* |
| **Пĕрре О, тепре О.** | *Çумăр пĕрре чашлаттарса çăвать, тепре чарăнать.* |
| **О пулсан та, О.** | *Палан çиме йӳçĕ пулсан та, усăллă.* |
| **О пулин те, О.** | *Уйăх сутатать пулин те, ăшăтмасть.* |

# Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене чарăну паллипе уйăрасси

| Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсен вырăнĕ | Схемăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| **Пĕр йышши членсем умĕнче** | **Ѳ: О, О, О.** | *Этем пурте пĕр: вырăс та, тутар та, чăваш та.* |
| **Пĕр йышши членсем хыçĕнче** | **О, О, О – Ѳ.** | *Улмуççисем, чие çырли тĕмĕсем, палан – пурте çеçкере.* |
| **Пĕр йышши членсем умĕн тăнă чух предложени вĕçленмесен** | **Ѳ: О, О – ….** | *Ăçта килчĕ унта: пӳрт çумĕнче, йывăç сулхăнĕнче – тĕрлĕ выльăх хутăш выртать.* |
| **Икĕ хутчен – пĕр йышши членсем умĕн те, хыççăн та каласан** | **Ѳ: О, О – Ѳ.** | *Эпĕ пурне те хĕрхенетĕп: чечеке те, йывăçа та, курăка та – пурне те, пурне те.* |

# Кӳртĕм сăмахсене чарăну паллисемпе кăтартасси

| Правилăсем | Тĕслĕхсем |
| --- | --- |
| **Сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăракан кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйрăмлатмалла мар – ыттисене уйрăмлатмалла.** | *Пичче хуларан паян килет иккен. Ахăртнех, манăн йăмăк тухтăр пулать. Пичче килсен, паллах, эп савăнатăп.* |
| **Пĕр-пĕр кĕçĕн членпа çеç çыхăнакан кӳртĕм сăмахсене предложенин ытти пайĕнчен çав кĕçĕн членпа пĕрле уйрăмлатмалла.** | *Шухăшланипе пулас, эпĕ часах çывăрса каяймарăм.* |

**Асра тытăр! *Ак(ă), ав(ă)* татăксем – кӳртĕм сăмахсем мар. Вĕсене чарăну паллисемпе уйрăмлатмаççĕ.**

***Акă хĕлле çитрĕ те.***

# Кӳртӗм предложенисене чарӑну паллисемпе уйӑрасси

| Правилӑсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| **Кӳртӗм предложение икӗ енчен те запятой е тире лартса уйрӑмлатаҫҫӗ, е скобкӑна хупаҫҫӗ. Запятойпа е тирепе уса курнӑ чухне кӳртӗм предложение пӗчӗкрен пуҫласа ҫыраҫҫӗ.** | *Сасартӑк, тем пулчӗ, автобус чарӑнчӗ.*<br>*Сасартӑк – тем пулчӗ – автобус чарӑнчӗ.*<br>*Сасартӑк (тем пулчӗ?) автобус чарӑнчӗ.* |

# Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисене ҫырасси

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| „Т!“ – а.<br>„Т?“ – а.<br>„Т“, – а. | А: „Т!“<br>А: „Т?“<br>А: „Т“. | А: „Т!“ – а.<br>А: „Т?“ – а.<br>А: „Т“, – а. | „Т, – а, – т!“<br>„Т, – а, – т?“<br>„Т, – а, – т“. | „Т! – а. – Т.“<br>„Т? – а. – Т.“<br>„Т, – а. – Т.“ |

Т – тӳрӗ пуплев.
А – автор сӑмахӗ.

# Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси

| | |
|---|---|
| Пайсем пĕр вăхăтри, пĕр лару-тăрури ĕçсене пĕлтерсен | , |
| Пайсен калăпăшĕ пысăк тата ăшĕнче чарăну паллисем пулсан | ; |
| Иккĕмĕш пайĕ пĕрремĕшне мĕн енчен те пулин ăнлантарсан | : |
| Пĕр ĕç хыççăн тепри хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулса иртсен | |
| Пĕр пайĕ теприне хирĕçлесен | – |
| Иккĕмĕш пайĕ пĕрремĕшĕн следствине е результатне пĕлтерсен | |
| Иккĕмĕш пайĕ ыйтуллă пулсан | ? |

# Грамматика йăнăшĕсенчен хăтăласси

*Глаголпа çыхăнакан япала ятне кирлĕ падеж формине лартманни*

***~~илемлĕх мелĕсене усă кур~~ – илемлĕх мелĕсемпе усă кур***

***~~чăваш чĕлхипе вĕрентет~~ – чăваш чĕлхи вĕрентет***

*Подлежащипе сказуемăя тĕрĕс çыхăнтарманни*

***~~икĕ çын ĕçлеççĕ~~ – икĕ çын ĕçлет***

*Камăнлăх форминче сăмахсене тĕрĕс çыхăнтарманни*

***~~сирĕн патĕнче~~ – сирĕн патăрта, сирĕн патра***

***пирĕн патĕнче – пирĕн патăмăрта, питĕн патра***

*Хисеп формисемпе тĕрĕс усă курманни*

***~~санăн куçусем~~ – санăн куçу***

*Падеж форми вырăнне хыç сăмах пĕлтерĕшлĕ япала ячĕпе усă курни*

***~~Манăн анне çинчен хаçат çинче пичетлесе кăларчĕç.~~***

***Манăн анне çинчен хаçатра пичетлесе кăларчĕç.***

*Ыйтуллă предложенисене тĕрĕс йĕркелеменни*

***~~Хăвăр ялăрти паллă çынсене пĕлетĕн?~~***

***Хăвăр ялăрти паллă çынсене пĕлетĕн-и?***

# Пуплев йăнăшĕсенчен хăтăласси

*Сăмахпа пĕлтерĕшĕ енчен йăнăш усă курни*

~~***Манăн ăраскал – университета вĕренме кĕресси.***~~

***Манăн ĕмĕт – университета вĕренме кĕресси.***

~~***Манăн аппа хăйĕн ĕçне юратса пурнăçлать.***~~

***Манăн аппа хăйĕн ĕçне юратса тăвать.***

*Вырăс сăмахĕсемпе вырăнсăр усă курни*

~~***Вăт илĕпĕр текстри 2-мĕш предложение.***~~

***Акă илĕпĕр текстри 2-мĕш предложение.***

*Диалектизмсемпе вырăнсăр усă курни*

~~***Эпир паян шĕкĕнтĕр кăлартăмăр.***~~

***Эпир паян кишĕр кăлартăмăр.***

*Синонимсемпе пĕлсе усă курманни*

~~***Эпĕ шултăра ĕмĕтпе пурăнатăп.***~~

***Эпĕ пысăк ĕмĕтпе пурăнатăп.***

*Пĕр сăмахах темиçе хут калани*

~~***Уявра конкурсра пулнă ачасем пулчĕç.***~~

***Уявра конкурса хутшăннă ачасем пулчĕç.***

*Тĕрĕс çырма ăнăçу сунатпăр!*